Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРӲШĔН

Юнкун
2007 ç., чӳк, 21
95
/9012/№
Хаçат 1932 çултанпа
тухса тăрать
Хакĕ ирĕклĕ
электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

**НАЛУК СЛУЖБИН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕ – Раççей Федерацийĕн налук органĕсен ĕçченĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Бюджета пуянлатас ĕç-хĕл вăл – питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ те яваплă ĕç. Унран Раççей тата Чăваш Ен халăхĕн пурнăçĕн шайĕн ӳсĕмĕпе пахалăхĕ, экономикăн малашнехи çирĕп аталанăвĕ килет. Сирĕн ĕçĕн чи кирлĕ кăтартусенчен пĕри бюджетăн тупăшĕсене пĕрмаях ӳстерсе пырассине тивĕçтерессипе çыхăннă. Кăçалхи тăхăр уйăхри иртнĕ çулхи çав тапхăртипе танлаштарсан мĕн пур шайри бюджета налуксемпе сборсем чылай нумайрах пухăннă.

Республикăна инвестицие илĕртессине вăйлатас, промышленноçăн вăй-хăватне палăрмаллах ӳстерес, налук ĕçне пĕлсе йĕркелесе пырас тĕлĕшпе пĕрле вăй хунипе çуллен çулах Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ бюджечĕн тупăш пайĕ пĕр чарăнми пуянланса пырать, вăл кăçал кăна виçĕ хут ӳсрĕ, çапла вара историре пулман виçене – 30 млрд. тенке çитрĕ. Çакă пире çĕнĕ задачăсене палăртма тата Чăваш Республикин комплекслă аталанăвне хăвăртлатма май парать.

Сире лайăх ĕçшĕн тата тивĕçе парăннăшăн тав тăватăп. Налук службин пур ĕçченне те Чăваш Ен ырлăхĕшĕн ăнăçлă ĕçлесе пыма çирĕп сывлăх, çемьере тивлетлĕх тата телей сунатăп.

***Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.***

**НАЛУК СЛУЖБИН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕ – Раççей Федерацийĕн налук органĕсен ĕçченĕн кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Сирĕн ĕçĕр-хĕлĕр обществăри тăнăçлăха тата социаллă лару-тăрăва çирĕплетет, район бюджечĕн тупăш пайне ӳстерме нумай пулăшать. Эсир налук саккунĕсене çирĕп пăхăнса тăрассине тивĕçтеретĕр, сире халăх хисеплет тата шанать. Иккĕленместĕп, федераци налук службин Чăваш Республикинчи райони хушшинчи 3-мĕш номерлĕ инспекци ĕçченĕсем хăйсен ырми-канми ĕçĕпе района малашне те ăнăçлă аталантарса пыма пулăшĕç.

Сире ăнăçлă ĕçлесе пыма сывлăхпа телей, сирĕн çемьесене ырлăх сунатăп.

***Йĕпреç районĕн пуçлăхĕ А. ПЕТРОВ.***

**ХИСЕПЛĔ ĔÇТЕШСЕМ, НАЛУК СЛУЖБИН ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Çак уяв кунĕнче сире, хаклă ĕçтешсем, налук службин ветеранĕсем, сирĕн çывăх тусăрсемпе çемйĕрсене йывăр, анчах патшалăхшăн питех те кирлĕ ĕçре малашне те çитĕнӳсем тума çирĕп сывлăх, телей, иксĕлми хастарлăх сунатăп.

Çĕршыв бюджетне пуянлатасси пирĕн професси ăсталăхĕнчен, йĕркелĕхпе принциплăхран килет, çĕршыв рынок хутшăнăвĕсен цивилизациллĕ юхăмне килĕшӳллĕн кĕрессипе те, Раççей экономики тикĕссĕн аталанса пырасси те нумай чухне пирĕнпех çыхăннă. Сирĕн ăсталăхăр, хăвăра шеллеменни, ĕçе парăнни, професси шайĕ пысăк пулни, тӳрĕлĕхпе ырă кăмăллăх, çитменлĕхсемпе килĕшсе тăманни, предпринимательсемпе пурăнакан мĕн пур çынсен çивĕч ыйтăвĕсемшĕн тимлени ӳлĕмрен те çĕршывăн финанс тытăмне çирĕплетме пулăшĕç тата пирĕн çынсен ырлăх-тивлечĕшĕн тăрăшас ĕçре тĕрлĕ шайри бюджетсене планпа пăхнă пек пуянлатса пымалли гаранти пулса тăрĕç.

***РФ Налук службин районсен хушшинчи 3-мĕш номерлĕ инспекци пуçлăхĕ А. АХМЕТОВА.***

**Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕччен**

**11 КУН ЮЛЧĔ**

**ПОДПИСЫВАЙТЕСЬ НА РАЙОННУЮ ГАЗЕТУ В КИОСКАХ «ЧУВАШПЕЧАТИ»!**

**В киосках «Чувашпечати» можно оформить подписку на районную газету «Çĕнтерӳшĕн» («За победу») по подписной цене на полугодие 120 руб. 00 коп., а также на республиканские и центральные газеты и журналы. Ознакомиться с подписным Каталогом на 1-ое полугодие 2008 года можно в любом киоске «Чувашпечати».**

**Преимущество подписки через киоски в том, что:**

**– подписные цены ниже, чем при традиционной подписке;**

**– гарантируется сохранность изданий;**

**– свое издание можно получить в любое удобное время.**



## СЕРТИФИКАТСЕНЕ САВĂНĂÇЛĂ ЛАРУ-ТĂРУРА ПАНĂ




ЫЙТУ: **В.В. Путин иккĕмĕш ача çуратакан хĕрарăмсене 250-шар пин тенкĕ пачĕ. Чăваш Республикинчи çемьесенче ачасен йышĕ ӳсрĕ-ши? Питĕ пĕлес килет.**

ХУРАВ: Республикăра юлашки çулсенче ача çуратасси ӳссе пырать. Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Енре кăçалхи 9 уйăхра, пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан, 719 ача ытларах çуралнă. Çемьесенче иккĕмĕш ачасем нумайрах çуралма пуçларĕç, ку кăтарту 43,5 процент ӳснĕ. 2007 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне, ЧР Пенси фончĕн управленийĕн кăтартăвĕсем тăрăх, 2597 хĕрарăм амăшĕн сертификатне илнĕ. Вĕсенчен 2090-шне икĕ ачашăн, 507-шне виçĕ ачашăн панă.

**ӲКЕРЧĔКРЕ: чӳк уйăхĕн 14-мĕшĕнче район пуçлăхĕ А. И. Петров савăнăçлă лару-тăрура ача амăшĕн капиталĕн 31 сертификатне панă.**

**10 уйăхра районта 264 ача çуралнă. Тин çеç кун çути курнă ачасенчен 87-шĕ çемьере иккĕмĕш ача, 40-шĕ – виççĕмĕш, 15-шĕ – тăваттăмĕш, 3-шĕ – пиллĕкмĕш, пĕри улттăмĕш ача шутланать. Çапла вара 146 ача амăшĕ патшалăх паракан 250 пин тенкĕлĕх çурату сертификатне илме пултараççĕ. Ку таранччен 93 ача амăшне асăннă сертификата панă ĕнтĕ.**

**2007 çулта иккĕмĕш е хыççăнхи ача çуратнă 97 çемье ача амăшĕн капиталне илме РФ Пенси фончĕн Йĕпреç районĕнчи управленине заявлени панă.**

## ПИРĔН ÇУЛ ПĔРЛЕ

**Путинпа пĕр шухăшлисем Президент майлă пулма чĕнсе каланă**

Висĕм кун пысăках мар Тверь хулинче пурăнакансен шучĕ тӳрех 700 çын чухлĕ ӳснĕ: Владимир Путин Президент çул-йĕрне ырлакансен пуçару ушкăнĕсен членĕсем Пĕтĕм Раççей Канашне пухăннă. Форума Раççейĕн 79 регионĕнчен килнĕ. Пĕтĕм Раççей Канашĕ çĕршыври çынсене яваплă тапхăрта Владимир Владимировичпа пĕрле пулма, унăн ĕçхĕлне малалла тăсма чĕнсе каланă.

Тĕрлĕ çын сăмах илнĕ форумра: Ростов облаçĕнчи шахтертан тата Калининградран килнĕ аспиранткăран пуçласа сумлă хирург Ренат Акчурин тата паллă Гоша Куценкопа Сергей Прохановах актерсем таранах. Кашнин калаçăвĕн тĕп шухăшĕ: Раççейри влаç ылмашăнăвĕ йĕркеллĕ иртгĕр, 90-мĕш çулсенчи пек арпашуна пăтрашу ан пултăр, 2007 тата 2008 çулсенчи суйлавсен хыççăн НПППри кӳршĕсенчи пек «тĕслĕ» революцисен сценарийĕ ан çырăнтăр тесе тăрăшмалла. Сцена çине улăхнă кашни çын ĕçтешĕсене тата пĕр шухăшлисене раштав уйăхĕн 2-мĕшĕнче суйлава хутшăнма тата сасăлама ыйтнă.

Тверь хулинче йышăннă Чĕнсе каланинче «Пирĕн Тăван çĕршыв ӳсĕмĕсем – пирĕн ӳсĕмсем те. Чăн тупăш ӳсме тытăнчĕ, ытларах та ытларах çын саккунлăхпа килĕшӳллĕн пурăнасшăн, налук тӳлесшĕн, хăйĕн прависемпе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешесшĕн. Шалу тата пенси тӳлеменни тахçанах манăçнă. Паян кашнинех общество вăйлă аталаннă тапхăрта, тăнăçлă ватлăхра пурăнас, тивĕçлĕ шалу илес, хамăра саккун хӳтĕленине туяс туртăм пĕрлештерет. Эпир хамăр пуласлăхшăн, ачасен малашлăхĕшĕн пăшăрханатпăр... Çавăнпа та патшалăх ертӳçи кам пуласси пирĕншĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ».

Форума хутшăннисен шухăшĕпе, раштавăн иккĕмĕшĕ парти списокĕпе суйламалли кун кăна мар, вăл Владимир Путин Президентăн политика çул-йĕрне шаннине пĕлтерекен кун. Путин тунă тата тăвакан ĕç-хĕл малалла та тăсăлтăр тетпĕр пулсан «пире вăйлă, яваплăха туякан, таса чунлă влаç кирлĕ». Раççей халăхĕ шанакан Президент, форума хутшăннисен шухăшĕпе, «малашне те пирĕн наци лидерĕ пулмалла».

***«РОССИЙСКАЯ ГАЗЕТА».***

## ВĔРЕНТӲ: ЦИФРĂСЕМ ТАТА ФАКТСЕМ

**Республика шкулĕсене компьютерпа тивĕçтерес енĕпе эпир Раççейре чи малтисен шутĕнче. Çапах та пĕлес килет: компьютер техники ял шкулĕсенче ытларах-и е хула шкулĕсенче-и?**

**П.КУЗЬМИН.**
***Йĕпреç поселокĕ.***

**Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсене компьютерпа тивĕçтерни**




Чăваш Енри пур шкула та пысăк хăвăртлăхлă Интернетпа тӳлевсĕр çыхăнтарнă, пур вăтам шкулăн та хăйĕн сайчĕ пур.

**ЧĂВАШСТАТ.**

***(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).***

# Уйăхсерен тӳлекен укçа калăпăшĕ ӳсет

2008 çулхи кăрлач уйăхĕнчен регионти çăмăллăхпа усă куракансен уйăхсерен паракан укçа калăпăшĕ ӳсет.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн саккăрмĕш сессийĕнче Чăваш Республикинчи çынсен уйрăм категорийĕсене социаллă пулăшу парасси çинчен йышăннă хăш-пĕр саккун актне улшăнусем кĕртесси çинчен саккун проектне сӳтсе явнă. Унта 2008 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен регионта çăмăллăхпа усă куракансен уйăхсерен паракан укçа калăпăшне ӳстерме палăртнă.

Вăрçă çулĕсенчи тыл ĕçченĕсен çак калăпăш 610 тенкĕ пулать, ĕç ветеранĕсен тата Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсен – 335 тенкĕ, реабилитациленисен – 1630 тенкĕ, политика репрессийĕнче шар курнă çынсен – 1390 тенкĕ. Хальхи пекех ĕç ветеранĕсен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшăвĕн, телефон çыхăнăвĕн 50 процентлă çыхăнăвĕпе усă курĕç. Репресси тапхăрĕнче шар курса каярахпа таса ята тавăрнисене телефон вырнаçтарса парĕç.

***ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин пресс-служби.***




# КУЛЬТПОХОД – КАШНИН ВАЛЛИ

**Чăваш Енри театрсем, музейсем тата спорт залĕсем уйрăм категорире пурăнакансем валли усă алăксен кунĕсенеирттерчĕç. Республика Правительстви культурăпа спортăн патшалăх учрежденийĕсене çăмăллăхлă йĕркепе çӳреме май туса парассишĕн пăшăрханчĕ.**

Чăваш Енĕн вице-премьерĕн, культура министрĕн Наталья Володинан сăмахĕсем тăрăх, ку пуçарăва çитĕнсе çитменнисене, инвалидсене, пенсионерсене, нумай ачаллă тата сахал тупăшлă çемьесене, призыв йĕркипе хĕсметре тăракан çар служащийĕсене тата ыттисене пулăшас тĕллевпе тунă. Йышăну республикăри музейсене уйăхра пĕрре вунсаккăр тултарманнисене тата нумай ачаллă çемьесене тӳлевсĕр кĕрсе курма хӳтлĕх парать. Тӳлевлĕ мероприятисем ирттернĕ чухне те учрежденисен укçа-тенкĕ, пурлăхпа техника базине тĕпе хурса, çăмăллатнă йĕркепе пулăшу пама сĕннĕ. Ку çĕнĕлĕх яла та çитĕ. Республикăри районсен тата хуласен администрацийĕсене çак ырă пуçарăва çул пама сĕннĕ, çавна май социаллă хӳтлĕхсĕр юлнă граждансен чун аталанăвне тивĕçлĕ шайра йĕркелесе пыма хушнă. Вĕсене çăмăллатнă, йӳнĕ культпоходсемпе вырăнти культура вучахĕсем тивĕçтерĕç.

Ырă сĕнӳ хут çинче çеç юлмĕ-ши? Республикăри музейсенче çитĕнсе çитменнисемпе нумай ачаллă çемьесене кашни уйăхăн юлашки вырсарникунĕнче çиччĕмĕш çул ĕнтĕ экспонатсемпе паллашма тӳлевсĕрех ирĕк параççĕ-мĕн. Пĕлтĕр кăна, çав çăмăллăха панăран, СССР летчик-космонавтăн А. Г. Николаевăн мемориал комплексĕнче, наци пултарулăхĕн музейĕнче 4 пин ытла çын пулнă, кăçал ку кăтарту халех 3 пинрен иртнĕ. Çакăнпа пĕрлех студентсем, курсантсем, салтаксем билетсемшĕн çурма хак – 10-20 тенкĕ тӳлеççĕ. Чăваш Ен культура министерствинче çăмăллăхпа усă куракансен йышĕ куравçăсен пĕтĕмĕшле хисепĕнче 5 процентпа танлашнине пĕлтерчĕç. Ыркăмăллăх мероприятийĕсем йĕркелесе ирттерессине социаллă учрежденисен ятарлă заявкисем тăрăх та пурнăçласа пыраççĕ.

***/«РОССИЙСКАЯ ГАЗЕТА»/.***

**УВАЖАЕМЫЕ РЕКЛАМОДАТЕЛИ!**

**Делайте бизнес с нами. Реальный тираж, реальная реклама.**

**Телефоны: 2-11-92, 2-11-97.**

ОФИЦИАЛЛĂ

# ВĔРЕНТĔВЕ МОДЕРНИЗАЦИЛЕМЕЛЛИ ШАНЧĂКЛĂ ÇУЛ

**Чăваш Ен федераци шайĕнчи проектсенче малтисен ретĕнче пулнине эпир тахçанах хăнăхнă ĕнтĕ. Республика вĕрентĕве модернизацилемелли комплекслă проекта пурнăçа кĕртмелли тивĕçе çĕнсе илнĕ регионсен конкурсĕнче çĕнтернине чылайăшĕ çапла пулмалла тесе шутлать. Унта вара пурĕ 21 регион хутшăннă. Чăваш Ен проекта самай ăнăçлă пурнăçласа каллех лидерсен йышне лекрĕ.**

**Çак кăмăллă хыпара республикăн Вĕрентӳ министерствин представителĕсем Мускавра Пĕтĕм Раççейри «Инноваци вĕрентĕвĕ» форумра илтнĕ. Проекта пурнăçлассипе мониторинг ирттерекен фирма-оператор даннăйĕсем тăрăх, Чăваш Ен лайăх кăтартусем тунă регионсен шутне кĕнĕ кăна мар, çак списока ертсе пырать вăл. Сăмах май каласан, Чăваш Республики вĕрентĕве модернизацилемелли проекта пурнăçламашкăн хушма 210 миллиона яхăн тенкĕ илнĕ, çак суммăна бюджета хывнă пулнă. Калама çук пысăк укçа-тенкĕпе ăçта усă курни çинчен çак кунсенче министр çумĕ Валерий Устяк каласа панă.**

**Малтан илнĕ 87 миллион тенкĕне районсене шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме субсиди вырăнне ярса панă. Сăмах май, çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче шкулсене йышăннин кăтартăвĕсем унччен хинчен чылай лайăхрах.**

**Халĕ шкулсем республика тата федераци бюджетне пула 31 химии кабинечĕпе, 29 вырăс чĕлхин кабинечĕпе, 22 географи кабинечĕпе, 18 физика кабинечĕпе, çавăх чухлех биологи кабинечĕпе пуянланнă.**

**Грантăн пысăк пайне – 24 миллион тенкĕне – справка, илемлĕ тата информаци литературине туянма янă. Çав шутра 1,5 миллион тенкĕлĕх чăваш чĕлхин учебникĕсене туяннă.**

**Республика шкул столовăйĕсем пирки тимлени федераци шайĕнчи ырă тĕслĕх пулса тăнă. Пĕтĕмпе 34 миллион тенкĕлĕх оборудовани туяннă. Чăвашсен опычĕ форума хутшăннисене кăсăклантарнă. Çитес çул ытти регионсене те шкул столовăйĕсем çине тимлĕх уйăрма сĕннĕ.**

**Чăвашсен вĕрентӳ системин тата тепĕр акцине пысăк хак панă ытти регионсенчи ĕçтешĕсем: пĕрремĕш класра вĕренекенсем валли хальхи вăхăтри сĕтел-пукан туяннă, çак сĕтел-пукана ачасен ӳсĕмĕпе вырнаçтарма пулать иккен.**

## Йĕпреç районĕнче вĕренĕве модернизацилемелли комплекслă проекта пурнăçа кĕртессипе мĕнле ĕçлени çинчен район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Анатолий НИКОЛАЕВ каласа парать.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2007 çулхи ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче «Вĕрентĕве çĕнетмелли комплекслă плана пурнăçа кĕртмелли тĕп çул-йĕрсем» йышăннă 118-р номерлă хушăва тата Чăваш Республикин Вĕрентӳ министерствин 2007 çулхи çу уйăхĕн 10-мĕшĕнчи «Вĕрентĕве çĕнетмелли комплекслă проекта пурнăçламалли мерăсем çинчен» приказа пурнăçласа, районта сахал мар ĕç туса ирттернĕ, çавна май çӳлерех асăннă комплекслă плана пурнăçа кĕртме кирлĕ тивĕçлĕ никĕс хатĕрленĕ. Ку тĕллевпе район пуçлăхĕ çакăн пек йышăнусем кăларнă:

– «Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисен ертӳçисене тата ертӳçĕсене преми парассипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухакан комисси йышне хавхалантармалли йĕркене çирĕплетесси çинчен» (2007 çулхи çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнчи 459-мĕш номерлĕ йышăну);

– «Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕ çумĕнчи муниципалитет управляющийĕн канашĕпе çав канашăн йышĕн йĕркине çирĕплетесси çинчен» (2007 çулхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнчи 461 «А» номерлĕ йышăну);

– «Районти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕрентӳ учрежденийĕсенчи педагогсемпе ертсе пыракансене ĕçшĕн тӳлемелли тата хавхалантармалли тытăма çирĕплетмелли йĕрке çинчен» (2007 çулхи авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 585 номерлĕ йышăну) т. ыт. те.

Комплекслă проекта пурнăçа кĕртмелли ятарлă план-график туса хатĕрленĕ. Унпа килĕшӳллĕн пăхнă мероприятисене Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствипе район администрацийĕ хушшинче йышăннă килĕшӳве тĕпе хурса ирттереççĕ.

2007 çулхи утă – авăн уйăхĕсенче районти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче шкул Уставĕсене улшăнусем кĕртме хатĕрлентĕмĕр, вĕсенчен пĕри вăл – вĕрентӳ ĕçĕнчи патшалăхпа общественность енчен ертсе пыракан орган (сăмах кунта управляющи канашĕ пирки пырать) вĕрентӳ учрежденийĕнчи ĕçшĕн тӳлемелли фондăн хавхалантармалли пайне уйăрнă çĕре хутшăнма пултарни çинчен çырса хуни. Шкулсен Уставĕсене кăна мар, вĕрентӳ ĕçĕнчи патшалăхпа общественноç енчен ертсе пыракан органсен Положенисене те çавăн пек улшăну кĕртни пирки çырса хунă.

Комплекслă проектăн пĕрремĕш çул-йĕрне пурнăçа кĕртнĕ май (вăл вĕрентекенсен тупăшне ӳстерме пулăшакан ĕç тӳлевĕн çĕнĕ тытăмне ĕçне кĕртнипе çыхăннă) тата педагогсене çĕнĕ условисенчи ĕçĕ çинчен ăнлантарса парас тĕллевпе шкулсен ертӳçисемпе ĕçлĕ канашлусем ирттернĕ. Мероприятисем пурнăçа мĕнлерех кĕрсе пынине ĕçлев комиссийĕнче те пăхса тухнă.

Кăçалхи авăн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕçшĕн çĕнĕ йĕркепе тӳлесси Раççей Федерацийĕн Президенчĕн премине çĕнсе илнĕ Йĕпреçри пĕрремĕш



**ӲКЕРЧĔКРЕ: «Модернизацие хăвăнтан пуçла», – теççĕ Чăваш Тимешри вăтам шкулти педагогсем /варринче – шкул директорĕ Л. И. Михайлова/.**

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнӳкерчĕкĕ.***

номерлĕ вăтам шкулта туллин хăйĕн вырăнне тупрĕ.

Районти вĕрентӳ учрежденийĕсен ертӳçисене ĕç кăтартăвĕсем тăрăх тӳлемелли йĕркене тата «Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен директорĕсен ĕç-хĕлĕн кăтартăвĕсене хакламалли виçесемпе критерисене» вĕрентӳ пайĕн 2007 çулхи авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 93-мĕш номерлĕ приказпа çирĕплетнĕ, районти çав нормативлă документсене комплекслă проектсен баннерне кĕртнĕ.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан ытти шкулсенче ĕçшĕн тӳлемелли фондра педагогика ĕçченĕсене хавхалантарма 10 процент уйăрнă. Çакна палăртма кăмăллă: хавхалантармалли пая валеçнĕ çĕре общественноç хастар хутшăнать.

**Районти вĕрентӳ учрежденийĕсене кашни ача пуçне нормăпа укçа-тенкĕпе тивĕçтересси çине куçни.** Çак йĕркене (2001 çултанпа) вĕренекен кашни ача пуçне бюджетран уйăракан укçан республикăри виçин никĕсĕ çинче туса хатĕрленĕ. Вĕрентӳ учрежденийĕсене ачасен йышне шутласа тӳлемелли виçе 2006 çулăн 14,6 проценчĕ чухлĕ ӳснĕ. Вĕрентӳ тăкакĕсен тӳпи çав виçере 6,2 процент (2006 ç. – 6,2%) пулнă. Вĕрентекенсене тӳлемелли ĕç укçипе учрежденисен ĕç укçин тӳпи 66 процентпа (2006 ç. – 59%) танлашнă.

Районти шкулсен 52 проценчĕ финанс хăйтĕллĕнлĕхĕ çине куçнă, вĕсем бухгалтери тата налук учетне хăйсемех йĕркелесе тăраççĕ.

**Районти вĕрентӳ пахалăхне хаклamalли тытăм аталанăвĕ.**

Районти шкулсенче вĕрентӳ пахалăхĕн мониторингне тĕрлĕ çул-йĕрпе йĕркелеççĕ.

Вĕрентӳ пахалăхне никама пăхăнмасăр, ирĕклĕн хаклассине çул парас тĕллевпе çиччĕмĕш çул ĕнтĕ XI классенчен вĕренсе тухакансен пĕтĕмлетӳллĕ (патшалăх) аттестацийĕ ППЭ мелĕпе иртет.

Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕ вĕрентĕвĕн пĕрлехи уçлăхĕн чиккисене анлăлатрĕ тата аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ чухне пурне те пĕр тан майсем туса пачĕ.

XI классенчен вĕренсе тухнисен пĕтĕмлетӳллĕ аттестацине çĕнĕ меслетпе ирттернĕ. Çак йĕркепе XI классенчен вĕренсе тухнă 423 ачана аттестациленĕ. Аттестаци ирттерме 8 вĕрентӳ учрежденине палăртнă, вĕсенче экзаменсем йышăнмалли пунктсем йĕркеленĕ. Вырăс чĕлхипе тата математикăпа ППЭ мелĕпе ирттернĕ пурте тухма тивĕçлĕ аттестацие XI классенчи 364 çамрăк хутшăннă.

**Районти вĕрентӳ учрежденийĕсен сечĕн аталанăвĕ: ăçта пурăннине пăхмасăр пĕтĕмĕшле лайăх пĕлӳпе тивĕçтермелли условисем туса парасси.**

Районта вĕрентĕвĕн эффективлă сетьне тăваççĕ: 7 базăллă шкул (вĕсенчен 2-шĕ – ресурс центрĕсем). Вĕсенчен укçа-тенкĕ, пурлăх, кадр ресурсĕсем пĕр çĕрте пулни вĕрентӳ пахалăхне палăрмаллах лайăхлатма май пачĕ, çакна укçа-тенкĕн пысăк эффективлăхĕ те уçăмлăн çирĕплетет. Шкулсене реструктуризаци тăвасси малалла пырать.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн 2 пуçламăш шкул-филиала хупнă, Экономри пуçламăш шкулĕ ача садне реорганизаци тунă.

Районти шкулсенче ку вĕренӳ çулĕнче 3455 ача вĕренеççĕ. Классенчи ачасен вăтам йышĕ – 17,2.

*(Вĕçĕ 6-мĕш стр.)*

# БЫВШИЕ РУКОВОДИТЕЛИ РАЙОНА

**(Продолжение. Нач. в №№85,88 – 89, 90 – 91).**

## МИДАКОВ
## Егор Яковлевич

**НОЯБРЬ 1938 – ЯНВАРЬ 1939**

Родился 25 октября 1908 года в д. Ойкассы Ядринского района Чувашской АССР в крестьянской семье, чуваш. Член ВЛКСМ с 1923 года, член ВКП(б) с 1929 года. Окончил Чувашскую областную советско-партийную школу 2 ступени в 1931 году.

Трудовая деятельность:

1926-1928 гг. ученик профтехшколы столяров Ядринского уезда д. Ойкассы;

1928 г. секретарь сельского Совета Ядринского уезда д. Ойкассы;

1928-1929 гг. председатель сельского Совета Ядринского уезда д. Ойкассы;

1929-1931гг. слушатель Совпартшколы II ступени г. Чебоксары Чув. АССР;

1931-1934 гг. зав. культурно-пропагандистским отделом Райкома ВКП(б) Татаркассинского района Чувашской АССР;

1934 г. редактор Татаркассинской районной газеты Чувашской АССР;

1934-1937 гг. слушатель института марксизма-ленинизма г. Горький;

1937-1938 гг. инструктор-преподаватель Чувашского отделения ИМЗО г. Чебоксары Чув. АССР;

1938 г. Первый секретарь райкома ВКП(б) Шумерлинского района ЧАССР;

1938-1939 гг. и.о. председателя райисполкома Ибресинского района ЧАССР;

1939 г. зав. парткабинетом Райкома ВКП(б) Вурнарского района ЧАССР;

1939-1941 гг. зав. отделом пропаганды и агитации РК ВКП(б) Вурнарского района ЧАССР;

1941-1942 гг. курсант военно-политических курсов г. Шадринск Челябинской области;

1942 г. инструктор политотдела в Саперной армии Западного фронта;

1942-1943 гг. инструктор политотдела тыловых частей Карельского фронта;

1943-1945 гг. инструктор политотдела 7 отдельного полка связи действующей армии;

1945 г. инструктор политотдела 1 отделения бригады связи Забайкальской армии;

1945-1978 гг. зав. отделом пропаганды и агитации РК ВКП(б) Вурнарского района ЧАССР;

1948-1949 гг. секретарь парторганизации Вурнарского леспромхоза ЧАССР;

1949-1952 гг. второй секретарь райкома ВКП(б), первый секретарь райкома КПСС Советского района ЧАССР;

1952-1955 гг. слушатель ВПШ при ЦК КПСС г. Москва;

1955 г. Первый секретарь райкома КПСС Моргаушского района ЧАССР.

Награжден орденом «Красной Звезды» в 1944 году, медалью «За оборону Советского Заполярья» в 1945 году, медалью «За победу над Германией в Великой Отечественной войне в 1941-1945 г.г.».

## МЕДНИКОВ
## Семен Антонович

**ЯНВАРЬ 1939 – СЕНТЯБРЬ 1940**

Родился 2 февраля 1904 года в дер. Вар-Посы Чебоксарского района Чувашской Республики в семье крестьянина-середняка, чуваш. Обучался в Чебоксарской совпартшколе II Ступени, окончил курсы марксизма-ленинизма в г. Чебоксары в 1933 году. Избирался депутатом Ибресинского районного Совета народных депутатов. Член ВКП(б) с 1931 года.

Трудовую деятельность начал в 1916 году отпильщиком Коптарского лесопильного завода купца Бергенгейма;

С 1917 по 1926 год работал укладчиком лесопильного завода «Чувашлеса», укладчиком и сплавщиком Сюктерского лесозавода «Чувашлеса» и Звениговского затона.

С 1926 по 1928 год служил в рядах Красной Армии.

С 1928 по 1932 год работал плотником, грузчиком и укладчиком леса Милютинского лесозавода «Чувашлестреста».

С 1932 по 1933 год - слушатель Чебоксарской совпартшколы II ступени, курсов марксизма-ленинизма при обкоме ВКП(б).

С 1933 по 1938 год - заведующий агитмассовым отделом, инструктор, заведующий парткабинетом Цивильского райкома ВКП(б).

С 1939 по 1940 год работал председателем Ибресинского райисполкома, с 1940 по 1942 год - председатель артели «Социализм» Ибресинского района.

В 1942 году назначен парторгом обкома ВКП(б) Ибресинского леспромхоза.

23 марта 1943 года погиб на фронте Великой Отечественной войны.

## КОНСТАНТИНОВ
## Алексей Константинович

**СЕНТЯБРЬ 1940 – ДЕКАБРЬ 1941**

Родился в 1903 году в дер. Азамат Аликовского района Чувашской Республики в бедняцкой крестьянской семье, чуваш. Окончил Горьковскую высшую колхозную сельскохозяйственную школу. Член ВКП(б) с 1926 года. Избирался депутатом Ибресинского районного Совета депутатов трудящихся в 1939 году.

Трудовую деятельность начал в 1919 году ликвидатором неграмотности школы взрослых д. Кармал Ядринского района.

С 1919 года обучался в Чебоксарской совпартшколе и Казанской военно-инженерной школе.

С 1922 по 1923 год занимался земледелием в хозяйстве отца.

В 1923 году избран ответственным секретарем Аликовской волостной ячейки ВЛКСМ.

С 1924 по 1925 год работал делопроизводителем исполкома волостного Совета.

С 1925 по 1933 год служил в Красной Армии, красноармейцем 1 зенитно-артиллерийского полка г. Ленинграда.

С 1928 по 1933 год – стрелок железнодорожной стрелковой охраны, заведующий клубом, заведующий буфетом, инструктор технической пропаганды ст. Арзамас.

После окончания Горьковской ВКСХШ в 1936 году назначен заместителем директора, директором Ибресинского МТС.

С 1940 по 1941 год работал председателем Ибресинского райисполкома.

С 1941 по 1943 год – заместитель районного уполномоченного народного комиссариата заготовок СССР Вурнарского, Комсомольского районов.

С 1943 года – директор Красноармейской, Ибресинской МТС.

## АЛЕКСЕЕВ
## Иван Алексеевич

**ФЕВРАЛЬ 1942 – ФЕВРАЛЬ 1945**

Родился 9 ноября 1904 года в дер. Чиршкасы Чебоксарского района Чувашской АССР в семье крестьянина-середняка, чуваш. Окончил Чувашскую совпартшколу, Московский политпросветинститут. Член ВКП(б) с 1928 года.

До 1921 года занимался земледелием в хозяйстве отца. С 1921 по 1927 год обучался в Чувашской совпартшколе, Московском политическом просветинституте.

В 1927 году назначен инспектором народного комиссариата просвещения Чувашской АССР, в 1927 году – инспектором Канашского районного отдела народного образования.

В 1928 году выдвинут на партийную работу инструктором Канашского райкома ВКП(б).

С 1928 по 1930 год работал преподавателем Чувашской совпартшколы.

В 1930 году избран секретарем Чебоксарского райкома ВКП(б).

В 1937 году – заведующим сельскохозяйственным отделом Чувашского обкома ВКП(б).

С 1938 по 1941 год работал директором Чувашского колхозного сельскохозяйственного техникума.

С 1941 по 1942 год – районный уполномоченный Министерства заготовок по Цивильскому району.

С 1942 по 1945 год работал председателем Ибресинского райисполкома.

С 1945 года – заместитель уполномоченного Министерства заготовок СССР по Чувашской АССР.

Награжден медалью «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941-1945 гг.», Почетной грамотой Президиума Верховного Совета Чувашской АССР в 1944 году.

## СОКОЛОВ
## Трофим Иванович

**ЯНВАРЬ 1945 – ФЕВРАЛЬ 1947**

Родился в марте 1915 года в дер. Мало-Собачкино (ныне д. Дубовка) Марпосадского района Чувашской Республики в середняцкой крестьянской семье, чуваш. Окончил Горьковскую двухгодичную партийную школу в 1950 году. Член ВКП(б) с 1945 года.

Трудовую деятельность начал в 1930 году колхозником Мало-Собачкинского колхоза «Свобода».

С 1931 по 1932 год – секретарь организационного бюро Марпосадского районного Совета «Автодор».

С 1932 по 1934 год - работал в хозяйстве родителей.

В 1934 году избран секретарем Собачкинского сельского Совета.

С 1936 по 1937 год – председатель культурного политического совета колхоза «Коминтерн».

С 1937 по 1939 год – старший налоговый инспектор Марпосадского финансового отдела райсполкома.

С 1939 по 1944 год работал заведующим общим отделом, секретарем, заместителем председателя Марпосадского райисполкома.

После окончания курсов руководящих советских кадров при Совнаркоме РСФСР в г. Горький, с 1945 по 1947 год работал председателем Ибресинского райисполкома.

В 1947 году избран секретарем Шихазанского райкома ВКП(б).

После окончания Горьковской двухгодичной партийной школы в 1950 году работал председателем плановой комиссии Марпосадского райисполкома.

С 1950 по 1951 год – заместитель начальника по политчасти Марпосадского райисполкома.

С 1950 по 1951 год – заместитель начальника по политчасти Марпосадской роторной партии Горьковского геологического управления.

С 1951 по 1961 год – секретарь, заведующий отделом пропаганды и агитации Марпосадского райкома КПСС.

С 1961 года – редактор Марпосадской районной газеты «Ленинское Знамя».

Награжден медалью «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941-1945 гг.» в 1945 году, Почетной грамотой Президиума Верховного Совета Чувашской АССР в 1944 году.

## ВАСИЛЬКОВ
## Петр Васильевич

**ФЕВРАЛЬ 1947 – ФЕВРАЛЬ 1954**

Родился 7 июля 1900 года в селе Вознесенское Урмарского района Чувашской Республики в семье зажиточного крестьянина, чуваш. Окончил Чебоксарский вечерний коммунистический университет в 1936 году, 9 месячные курсы переподготовки руководящих партийных и советских работников при Чувашском обкоме ВКП(б) в 1950 году. Член ВКП(б) с 1938 года.

Трудовую деятельность начал в 1916 году матросом на барже акционерного общества «Океан» на реке Волга.

С 1917 года – чернорабочий нефтесклада «Братья Нобель» в г. Рыбинск.

С 1918 по 1919 год работал в хозяйстве отца.

С 1919 по 1922 год служил в рядах Красной Армии.

В 1923 году работал в хозяйстве отца.

С 1924 по 1925 год работал председателем Вознесенского, Никольского волостного крестьянского комитета.

С 1926 по 1927 год – заведующий финансовой налоговой частью, член исполкома Никольского волостного Совета.

С 1927 по 1928 год – налоговый бухгалтер Чебоксарского райисполкома.

С 1928 по 1939 год работал контролером сберкассы п. Ибреси, кассиром-счетоводом Урмарской фабрики «Единство», инструктором Чувашпотребсоюза, председателем правления Канашского райпотребсоюза, управляющим Чувашской конторой «Заготскот», председателем президиума «Чувашкоопинсоюз».

С 1939 по 1942 год работал заместителем наркома, наркомом местной промышленности Чувашской АССР.

С 1942 по 1947 год работал председателем Первомайского райисполкома, с 1947 по 1954 год – председателем Ибресинского райисполкома.

Избирался депутатом Ибресинского районного Совета депутатов трудящихся. Награжден медалью «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941-1945 гг.» в 1945 году, орденом «Знак почета» в 1950 году.

## ПАВЛОВ
## Михаил Павлович

**АВГУСТ 1954 – АВГУСТ 1959**

Родился в ноябре 1906 года в дер. Арабоси Урмарского района Чувашской Республики в бедняцкой крестьянской семье, чуваш. Окончил партийные курсы Главного Политического Управления РККА в г. Москве в 1941 году, Горьковскую межобластную партийную школу. Член ВКП(б) с 1929 года.

Трудовую деятельность начал в 1921 году делопроизводителем исполкома Арабосинского волостного Совета Урмарского района.

С 1925 по 1929 год – секретарь Урмарского народного суда, заведующий канцелярией Урмарской мебельной фабрики «Единство».

С 1929 по 1930 год – управляющий делами, заведующий особым сектором Чувашского профсоюзного Совета.

С 1930 по 1933 год работал уполномоченным Чувашского отдела ОГПУ.

В 1933 году работал в колхозе «Арабось».

С 1933 по 1939 год – заведующий оргинструкторским отделом, председатель райплана, заместитель председателя Цивильского райисполкома.

С 1939 по 1941 год – начальник строительства и директор завода примусных горелок Наркома местной промышленности РСФСР.

С 1941 по 1946 год – служба в Советской Армии в должности военкома отдельного батальона и заместителя командира инженерно-саперного батальона.

С 1946 по 1954 год работал председателем исполкома Янтиковского районного Совета, с 1954 по 1959 год – председателем исполкома Ибресинского районного Совета депутатов трудящихся.

Избирался депутатом Верховного Совета Чувашской АССР четырех созывов, в двух созывах возглавлял бюджетную комиссию, в течение одного из созывов работал заместителем Председателя Президиума Верховного Совета ЧАССР. Избирался членом Чебоксарского горкома ВКП(б), Цивильского, Янтиковского, Ибресинского райкомов ВКП(б), депутатом Цивильского, Ибресинского районного Совета депутатов трудящихся. Награжден орденом «Красная Звезда» в 1943 году, тремя медалями в 1943 и 1945 годах.

## ИВАНОВ
## Анатолий Иванович

**ИЮЛЬ 1959 – ФЕВРАЛЬ 1961**

Родился в июле 1923 года в деревне Ящерино Марпосадского района Чувашской АССР в семье сельского учителя, русский. Окончил Высшую партийную школу при ЦК КПСС в 1960 году. Член КПСС с 1946 года.

В 1942 году призван в ряды Советской Армии, служил в должности помощника командира взвода огневой группы 86 ОГМД.

С 1942 по 1943 год после тяжелого ранения лечился в эвагоспитале 3171 г. Рыбинска.

После демобилизации в 1943 году работал военруком Ящеринской начальной школы Марпосадского района.

С 1943 по 1946 год – комсорг ЦК ВЛКСМ школы ФЗО №4 г. Мариинского Посада.

С 1946 по 1950 год – первый секретарь Марпосадского райкома ВЛКСМ.

После окончания Горьковской межобластной партийной школы в 1952 году работал инструктором отдела парторганов Чувашского обкома КПСС.

В 1952 году избран первым секретарем Чувашского обкома ВЛКСМ.

С 1955 по 1956 год работал заведующим сектором отдела партийных органов Чувашского обкома КПСС.

С 1956 по 1959 год – второй секретарь Ибресинского райкома КПСС.

С 1959 по 1961 год – председатель Ибресинского районного Совета депутатов трудящихся.

Избирался членом Ибресинского райкома КПСС, депутатом Ибресинского районного Совета депутатов трудящихся. Награжден орденом Славы, четырьмя медалями, двумя Почетными Грамотами Президиума Верховного Совета Чувашской АССР.

## ЛОДИН
## Яким Никифорович

**ФЕВРАЛЬ 1961 – АПРЕЛЬ 1964**

Родился 29 августа 1913 года в деревне Третьи – Вурманкасы Цивильского района Чувашской Республики в семье крестьянина-середняка, чуваш. Окончил рабфак в г. Чебоксары в 1933 году, Горьковскую двухгодичную партийную школу в 1948 году.

Трудовую деятельность начал в 1933 году учителем математики Поваркасинской семилетней школы Цивильского района.

С 1934 по 1935 год – студент Московского государственного университета.

С 1935 по 1941 год работал учителем Толиковской средней школы Чебоксарского района, завучем Черноречкенской железнодорожной школы № 33 Красноярского края.

В 1942 году выдвинут на партийную работу заместителем начальника политотдела Козулькинского МТС Красноярского края.

С 1943 по 1946 год работал инструктором Чебоксарского горкома ВКП(б), парторгом Чувашского обкома ВКП(б) Заволжского торфопредприятия.

После окончания Горьковской партийной школы работал секретарем партбюро Заволжского торфопредприятия, секретарем, вторым секретарем Советского райкома КПСС.

С 1955 по 1961 год работал председателем исполкома Советского, а с 1961 по 1964 год председателем исполкома Ибресинского районного Совета депутатов трудящихся.

Избирался членом Козульского райкома партии Красноярского края, членом Чебоксарского городского, Советского, Ибресинского районных комитетов КПСС, депутатом Советского Ибресинского районных Советов депутатов трудящихся. Награжден медалями «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941-1945 гг.» в 1945 году, «За трудовую доблесть» в 1950 году.

***(Продолжение следует).***

## *Владимир ЧУРОВ:* ИЗВЕЩЕНИЯ ОБ ОТВЕТСТВЕННОСТИ ЗА НЕЯВКУ — ПРОВОКАЦИЯ

**Москва, 15 ноября -РИА «Новости». Глава ЦИК РФ Владимир Чуров призвал правоохранительные органы разобраться с ситуацией в Башкирии и Чувашии, где были распространены фальшивые извещения от имени региональных избиркомов, в которых говорилось об ответственности граждан за неявку 2 декабря на избирательные участки для голосования на выборах в Госдуму.**

«Это провокационная акция, направленная на подрыв авторитета избирательных комиссий», — заявил Чуров в четверг в ходе видеоконференции с избирательными комиссиями субъектов РФ. По его словам, люди, которые изготовили и распространили извещения, пока не установлены. Однако в том, что это «фальшивки», глава ЦИК не сомневается. «Я уверен, что ни одна избирательная комиссия субъекта РФ никогда не нарушит закон», — заявил Чуров.

## ОТДЕЛЬНЫЕ ПАРТИИ ПРИВЛЕКАЮТ ПРОФЕССИОНАЛЬНЫХ ПИАРЩИКОВ

**Чувашский ЦИК никак не комментирует заявление председателя Центризбиркома России Владимира Чурова о том, что в Чувашии были распространены от имени избиркома фальшивые уведомления для избирателей, обязывающие прийти на голосование. Поэтому до сих пор остается неизвестным, где именно произошел выброс фальшивок и как продвигается расследование данного факта. Источник в ЦИК Чувашии, пожелавший остаться неизвестным, высказал корреспонденту ИА Regnum предположение, что, скорее всего, Чуров ошибся с регионом, так как никто в Чувашии до сих пор не видел этих фальшивых приглашений. Все лидеры чувашских региональных отделений партий «Единая Россия», КПРФ, ЛДПР, «Патриоты России» и «Справедливая Россия» в один голос утверждают, что узнали о фальшивках от главы ЦИК РФ Чурова из центральных телеканалов. Если бы они были, партийные активисты принесли бы их в свои избирательные штабы, уверены они.**

Такого же мнения придерживается вице-премьер правительства Чувашии — министр культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Наталья Володина. Между тем она заявила ИА Regnum, что «характер избирательной кампании в Госдуму 2007 года связан с новой пропорциональной системой и отличается тем, что отдельные партии привлекают профессиональных и высокооплачиваемых пиарщиков, которые на региональном уровне применяют грязные технологии». «Причем если раньше черный пиар использовался в издании фальшивых листовок, газет, роликов, направленных против оппонентов, то сегодня провокационные материалы поднялись до уровня ЦИКа, и это страшно, — сказала Володина. — Вопиющий случай распространения фальшивок якобы от избиркома с «обязательным голосованием» и угрозой «об уголовной ответственности» должен обратить внимание всего нашего общества на эту проблему. Не только правоохранительных органов, не только российских законодателей, которые должны исключить правовую брешь в избирательном процессе, позволяющем безнаказанно использовать подобные технологии. Но и самих политтехнологов, которые должны понимать, что их деньги становятся такими же грязными, как и их грязные технологии, что они должны способствовать развитию гражданского общества в стране, а такими методами гражданское общество не построишь и через такие технологии россий-ские медиа по-настоящему свободными и демократическими не сделаешь».

## УГОЛОК САТИРЫ

*– Давайте договоримся: во время выборов не марать друг друга!*



*– Смотри, Моська пытается припугнуть слона. Наверное, хочет поднять свой рейтинг...*



# «Справедливая Россия»

## НОВЫЙ КУРС В ЧУВАШИИ

• Создать не менее 200 тысяч рабочих мест в промышленности, сельском хозяйстве и строительстве.

• Поднять уровень оплаты труда в три раза.

• Добиться повышения пенсий до 65% от прежнего заработка.

• Минимальная пенсия должна составлять не менее 6 000 рублей.

• Осуществить программу массового строительства «Справедливый дом» для решения жилищной проблемы малообеспеченных семей.

**Голосуй за партию «Справедливая Россия»! СПРАВЕДЛИВОСТЬ! ЗАКОННОСТЬ! ДОСТАТОК!**



**Анатолий АКСАКОВ кандидат в депутаты Государственной Думы РФ**

*(Публикация оплачена из избирательного фонда партии «Справедливая Россия»).*

**Йĕпреçре чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче хайне евĕрлĕ спорт ăмăртăвĕ иртрĕ: çăмăл атлетсем ку хутĕнче пирĕн ентешĕмĕрĕн, тĕнчипе палăрнă Смычка хĕрĕн, Бостонри, Лос-Анджелесри, Парижри марафонсен çĕнтерӳçин Лидия Григорьеван призĕсене çĕнсе илессишĕн кросс чупрĕç.**



# ТĔНЧИПЕ ПАЛЛĂ ЕНТЕШĔМĔРĔН ПРИЗĔСЕНЕ ÇĔНСЕ ИЛЕССИШĔН



Спортсменсен пысăк уявĕ Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкулĕнче усăлчĕ. Унта пуçтарăннисен умĕнче Лидия Григорьева хăй, район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Вячеслав Михалик тухса калаçрĕç, атлетсене ăмăртура çитĕнӳ сунчĕç.

Кросра пĕтĕмпе 14 команда, 186 вĕренекен хутшăнчĕ. Ăмăртусене, ачасен ӳсĕм çулне кура, темиçе ушкăна пайласа йĕркелерĕç.

1990-1991 çулсенче çуралнă арçын ачасем 2000 метра чупса ăмăртрĕç, çĕнтерӳçĕсем çаксем:

1 вырăнта – Петр Еремеев (Пучинке) 2 вырăнта – Денис Савинов (Йĕпреçри 1-мĕш шкул), 3 вырăнта – Алексей Николаев (Хурамал).

Çак çулсенчех çуралнă хĕрсен ушкăнĕ 1000 метра чупса ăмăртрĕ, малти виçĕ вырăна черетпе çаксем йышăнчĕç: Наталья Григорьева (Хурамал), Екатерина Марушева (Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкул), Ольга Хурасьскина (Хурамал).

1992-1993 çулсенче çуралнă яшсем 1000 метра чупнă, вĕсенчен çаксем çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç:

1 вырăн – Александр Маргинов (Туçа), 2-мĕш вырăн – Михаил Шибаев (Пучинке), 3 вырăн – Сергей Назаров (Эйпеç).

1992-1993 çулсенче çуралнă хĕрсем 1000 метра чупса ăмăртрĕç, вĕсенчен 1 вырăна Екатерина Аюкина (Хурамал), 2 вырăна Ксюша Никанорова (Туçа), 3 вырăна Алена Рыжова (Пучинке) йышăнчĕç.

1994-1995 çулсенче çуралнă арçын ачасем те пĕр çухрăма чупрĕç, вĕсенчен Тусари Артем Иванов дистанцие чи малтан парăнтарчĕ. Ун хыççăн Çĕнĕ Выçлири Алексей Алексеев çитрĕ, виççĕмĕш – Павел Краснов (Çĕнĕ Выçли).

Çав çулсенчех çуралнă хĕрсенчен палăртнă дистанцие чи малтан Елена Иванова (Туçа) чупса тухрĕ, Хурамалти Нина Ильина – 2-мĕш вырăнта, Татьяна Комиссарова (Пучинке) – виççĕмĕш вырăнта.

1996 çулта çуралнă тата унран та çамрăкрах арçын ачасенчен, 1000 метрлă дистанцие парăнтарса, финиша чи малтан Сергей Михайлов (Чăваш Тимеш) чупса çитрĕ, Тусари Вячеслав Мусьтаков – 2-мĕш, Николай Назаров (Хурамал) 3-мĕш вырăнсене йышăнчĕç. Çак ӳсĕмри хĕрачасенчен Хурамалти Раиса Ильинана çитеккенни пулмарĕ. Вăл – 1-мĕш вырăнта. Ун хыççăн – Кристина Кондратьева (Пучинке), Эйпеçри Ирина Михайлова – виççĕмĕш.

Призерсене пурне те грамотăсемпе наградăланă. Чи лайăх результат кăтартнă 5 атлета Лидия Григорьева призсемпе, асăннăлăх парнесемпе чыс турĕ. Нумайăшне кроссовкисем, спорт тумĕсем, спорт сумкисем, футболкăсем парса хавхалантарчĕ.

Тĕнчипе паллă спортсменкăпа тĕл пулни, унран автограф илни уява киолнисен асĕнче ĕмĕрлĕхех упранса юлĕ.

***Район администрацийĕн сайтĕнчен.***

**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** *стартра – хĕрсен ушкăнĕ; Лидия Григорьева тата унăн тренерĕ ăмăртăва хутшăнма кăмăл тунисене саламлаççĕ.*

***Н. РАЙМОВ сăнӳкерчĕкĕсем.***

# ВĔРЕНТĔВЕ МОДЕРНИЗАЦИЛЕМЕЛЛИ ШАНЧĂКЛĂ ÇУЛ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 2-мĕш стр.).**

Вĕренекенсен йышĕ иртнĕ вĕренӳ çулĕнчинчен 249 ача чакнă.

Шкулсене реструктуризаци тăвассине малалла пурнăçланă май, ресурс центрĕсем база тата вĕрентĕвĕн ытти учрежденийĕсемпе хутшăнса ĕçлесси малалла аталанать, çакă аслă классенчи ачасен профиль вĕрентĕвне йĕркелеме пулăшать.

Районти вăтам тата тĕп шкулсем пурте профиль умĕнхи хатĕрленӳ сăнавне хутшăнаççĕ. 10 класа çӳрекенсен профиль вĕрентĕвне йĕркес тĕлĕшпе 2 ресурс центрĕ ытти шкулсемпе çыхăну тытать. Кашни шăматкунах вăтам шкулсем вĕренекенсем Йĕпреçри пĕрремĕшпе иккĕмĕш тата Хурамалти вăтам шкулсенче пуçтарăнаççĕ. Çак профильсемпе диффенциллĕ вĕрентӳ йĕркеленĕ: Физикăпа, математикăпа, информацие тата технологипе, социаллă-экономика, естественлă-наукăллă ыйтусемпе, филологипе. Çапла вара, пур вăтам шкула та профиллĕ вĕрентĕве явăçтарнă. «Шкул автобусĕ» программăпа районта 9 автобус пур, 21 ялта пурăнакан ачасене база шкулĕсене илсе пыраççĕ. Çапла вара, ачасем ăçта пурăннине тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсем мĕнле тупăш илнине пăхмасăр пахалăхлă пĕлӳ пама майсем усăлаççĕ.

Кăçалхи виççĕмĕш кварталта кăна района 1 млн. тенкĕлĕх икĕ çĕнĕ КАВЗ шкул автобусĕ (Кĕлĕмкассипе Пысăк Упакасси шкулĕсем), 1018500 тенкĕлĕх 3 «Газель» микроавтобус (Йĕпреçри пĕрремĕшпе иккĕмĕш вăтам шкулсем) килнĕ.

Вĕрентĕве çĕнетмелли комплекслă проектпа килĕшӳллĕн уйăрнă 2329 пин тенкĕ укçапа база шкулĕсемпе ресурс центрĕсенче юсав ĕçĕсем тума усă курнă.

Шкулсенчи библиотекăсемпе столовăйĕсенче пуринче те кăçал юсав ĕçĕсем иртрĕ.

Районти шкулсене кăçалхи авăн уйăхĕнче пĕрремĕш классенчи ачасем валли 408100 тенкĕлĕх сĕтел-пукан, столовăйсем валли 790082 тенкĕлĕх тĕрлĕ хатĕр тата шкулсенчи библиотекăсем валли 212617 тенкĕлĕх вĕрентӳпе илемлĕ литература тyяннă.

Комплекслă проектăн пиллĕкмĕш çул-йĕрĕ – «Вĕрентӳ ĕçне ертсе пыма общественноç хутшăнăвне анлăлатасси». Ăна пурнăçа кĕртсе, вĕрентӳ учрежденийĕсенче пуринче те управляющисен канашĕсене тунă. Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕ çумĕнчи муниципалитет канашне 2007 çулхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче йĕркеленĕ (Район пуçлăхĕн 2007 çулхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнчи 461 «А» номерлĕ йышăнăвĕ). Канаш 15 çынран тăрать.

Чăваш Тимешри тата Йĕпреçри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулсен никĕсĕ çинче 2005 çулта шкулсенчи попечительсемпе управляющисен канашĕсен моделĕсене тĕрĕслемелли педагогикăн республикăри сăнавлă площадкисене йĕркеленĕ.

«Древстрой» ОООн генеральнăй директорĕ, вĕрентӳ попечителĕсен республикăри Канашĕн членĕ, Пучинкери вăтам шкултан вĕренсе тухнă, çав шкултах учительте ĕçленĕ Алексей Петрович Кузьмин тăрăшнипе шкул çулне çитмен ачасен вĕрентӳ учрежденийĕсемпе шкулсенче çулсеренех юсав ĕçсем тăваççĕ. Çапла вара, çӳлерех асăннă Канашсем хăйсен кулленхи ĕçĕнче шкулсен вĕрентӳпе пурлăх тата хуçалăх базисене çирĕплетессипе, тирпей-илем кӳрессипе, санитарипе гигиена условийĕсене лайăхлатассипе çыхăннă ыйтусене тĕп вырăнта тытаççĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнчен тытăнса вара çав Канашсем вĕрентĕве çĕнетмелли комплекслă проекта пурнăçа кĕртме те пуçаруллăн хутшăнма пуçларĕç.

Çав Канашсене тунăранпа районти вĕрентӳ тытăмĕ усă та таса пулса пыма тытăнчĕ.

2007 çулта районти пур шкулсенче те директорсем общественноç умĕнче усă отчетсем туса панă, çавăн чухне вĕрентӳ тата финанс ĕçĕ-хĕлĕ мĕнлерех пулса пыни çинчен пĕлтернĕ. Çав докладсене пĕтĕмпех район администрацийĕн сайчĕ çинче вырнаçтарнă.

Комплекслă проекта пăхнă мероприятисене пурнăçлас тĕлĕшпе пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче ĕçсем малалла пыраççĕ.

## АСĂРХĂР: ÇУЛ ÇИТМЕННИСЕМ

# ВИЛĔМ СЕРЕПИНЧЕН ТУРТСА КĂЛАРНĂ

**«Курманнин курас килет», – теççĕ халăхра. Ачапăчан та хăвăртрах çитĕнес ĕмĕт малта тăрать. Çитĕннĕ çын пулма мĕнле лайăх! Пĕр шикленмесĕр пирус туртма пулать. Е эрех-сăра сыпма та чăрмав çук. Ава çитĕннисем лавккаран эрех илсе тухаççĕ те айккинерех пăрăнса «на троих» туса илеççĕ. Питĕ илĕртекен япала пулса тăчĕ эрех пирĕн саманара. Çитĕннисем çав хаяр шывшăн питĕ хĕпĕртеççĕ-çке!**

Эйпеç ялĕнче пилĕк тус пурăннă: Александр Емельянов, Александр Кириллов, Олег Федоров, Алексей Журавлев, Денис Михайлов. Вĕсем «çитĕннисен» ретне тăма питĕ ĕмĕтленнĕ, теççĕ. Чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче ĕмĕчĕ пурнăçланнă. Денис Михайлов юлташĕсене çур литр сăмакун тупни çинчен пĕлтернĕ. Шăршлă шĕвеке çийĕнчех тĕрĕслесе пăхма шухăшланă. Анчах ăçта «тĕрĕслемелле-ха» ăна? Вĕсем çитĕннисем евĕр лавкка хыçне çул тытнă. Пиллĕкĕн 0,5 литрлине пушатнă та ялти культура çуртне çул тытнă.

Клубра вĕсем çитĕннисем евĕр «чăнкă» пуласшăнччĕ те çав, «плансене» Сашук Емельянов çемçелсе кайни пăснă. Кăштахранах ăна япăх пулнă, вăл хăсма пуçланă, сулкаланма тытăннă. Юлташсем Сашука киле ăсатса яма шутлаççĕ.

Юрать-ха шăп çав вăхăталла яла «васкавлă пулăшу» машини килнĕ пулнă, Сашука Йĕпреçри тĕп больницăна илсе çитернĕ. Вилнĕ сăн çапнă ачана тухтăрсем пурнăç парнеленĕ. Çапла вара çак пилĕк тусшăн 2007 çулхи чӳк уйăхĕн 3-мĕшĕ ĕмĕрлĕхех паллă кун пулса тăчĕ. Çур литрлă савăтри сăмакун вĕсене çитĕннисен йышне кĕме пулăшаймарĕ. Çак инкек хыççăн та алла черкке тытĕç-ши ĕнтĕ вĕсем?

Юлашкинчен калани: васкавлă пулăшу бригадисем 9 уйăхра кăна çынсен пурнăçне çăлма 4842 хутчен çула тухнă, вĕсенчен 492 тĕслĕхĕ эрех-сăрапа ашкăннипе çыхăннă. Çак кăтарту 10,2 процентпа танлашать. Çав шутра организм наркăмăшланнипе 130 хутчен, ытлашши ӳсĕрĕлсе кайнипе япăх пулнăран 345 хутчен, алкоголь суррогачĕсем ĕçнипе 17 хут васкавлă пулăшăва чĕннĕ.

***А. ТРОФИМОВ,***
***милицин участокри уполномоченнăйĕ.***

# САЛАМЛАТПĂР

Ылтăн пек ыр çыннăмăрсене, кĕмĕлрен те хаклă аттепе аннене, кукамăйпа кукаçине, асаттепе асаннене – Чăрăшкассинче пурăнакан **Василий Гавриловичпа Клавдия Яковлевна КРИНКОВСЕНЕ** – ăшшăн та кăмăллăн Ылтăн туй ячĕпе саламлатпăр. Тепĕр 50 çул та пĕрле шăкăл-шăкăл калаçса пурăнма, ачисемпе мăнукĕсен савăнăçне пĕрле пайлама, вĕсене ăшă сăмахпа та, ырă ĕçсемпе те пулăшсах тăма таса сывлăх, иксĕлми юратупа çирĕп вăй-хал сунатпăр. Ялан пĕр-пĕрне хисеплесе, ăнланса пурăнмалла пултăр. Эпир сире юрататпăр, нумай-нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр.

Эсир пуррипе тăван кил ăшă,
Пире чĕнет йыхрав ярса...
Эсир пулăр ĕмĕр-ĕмĕр сывă
Пире тĕрек çунат парса.

***3 ХĔРĔПЕ 2 ЫВĂЛĔ, КИНĔСЕМ, МĂНУКĔСЕМ, КӲРШИСЕМ.***


# РЕКЛАМА И ОБЪЯВЛЕНИЯ

**876. Утерянный паспорт на имя Федорова Михаила Станиславовича прошу вернуть за вознаграждение по адресу, указанному в паспорте. Т.: 2-23-62, 89278671936.**

**879. ПРОДАЮ земельный участок в центре п. Ибреси. Тел.: 89278485588, 89278485676.** 2-1

**881. ПРОДАЕТСЯ 3-х комн. квартира, имеются баня, гараж, сарай, зем. участок или МЕНЯЕМ на дом с газовым отоплением. Тел.: 89279967160.** 2-1

**882. ТРЕБУЕТСЯ продавец с опытом работы в отделе стройхозтовары. Тел.: 89278538686.**

**878. ПРОДАЮ доски сосновые сухие, дрова сухие. Тел.: 2-26-72, 89093013012.**

**877. ПРОДАЮ телегу конную на резине, мотоцикл ИЖ-Планета с коляской, путевку в Сочи – 5 тыс. рублей. Тел.: 89053444735.**

**865. ПРОДАЮ ленточную пилораму ПЛ-85 или МЕНЯЮ на доски. Телефон: 89279959050.** 2-2


Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.


*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

**Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР**

**Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6**

**ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, производственный участок — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.**

**Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.**

**Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3278: чув. – 2410, русск. – 868 Зак. №**

**Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓡ**

**Срок сдачи в печать — 17.00**
**Сдан в печать в 10.00**

**Ответственный за выпуск Филиппов А. А.**